Чăваш Ен Пуçлăхĕ Михаил Игнатьев Чăваш Республикин Патшалăх Канашне янă Çыру республика çитĕнĕвĕсемпе проблемисем пирки уçăмлă та ăнланмалла янрарĕ.

Вĕсем республикăн экономикăпа социаллă сферинче те пур, анчах татса памалли ыйтусем сахал мар.

Агропромышленноç комплексĕнчи лайăх улшăнусене, ăнăçла ивестици проекчĕсене  палăртрĕ Чăваш Ен Пуçлахĕ Михаил Игнатьев. Фермер хуçалăхĕсем, кооперативсем аталанса пыни пирки  каланă.

Çырура çывăх вăхăтра пурнăçламалли конкретлă задачăсене палăртнă. Агропромышленноç комплексĕнче кун пек задачăсем вĕсем – инвестицисемпе уса курса çĕнĕ технологиллĕ производствăсене хута ярасси, тивĕçлĕ ĕç укçиллĕ пысăк тухăçлă ĕç вырăнĕсем туса хурасси. Малалла та тĕллевлĕ утăмсем тытса вĕсене тухăçлăрах пурнăçлама çине тăрсах ĕçлемелле.